Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

82 (8043) № ✻ Юн кун, 2012 ҫулхи юпа (октябрь) уйӑхӗн 24-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Ҫӗнӗлӗхсем – библиотекӑра та

Ял культури аталанать

***Пурнӑҫпа тан пырас текенсем паян хӑйсене пырса тивекен ҫӗнӗлӗхсене тӑтӑшах алла илсе пыраҫҫӗ. Вырӑнсене тухсан ял культурине аталантарассинче те ҫакӑ сисӗнет.***

***Тивӗш ял библиотеки хӑйӗн тытӑмӗнче 8 пин ытла кӗнеке упрать. Унпа усӑ куракансем 603 ҫын. «Пирӗн патӑмӑра ытларах пенсионерсемпе шкул ачисем ҫӳреҫҫӗ пулин те, библиотекӑри кӗнекесемпе тата компьютерпа Интернета тухассипе ыттисем те хаваспах туслӑ ҫыхӑну тытаҫҫӗ», – тет чӗрӗк ӗмӗре яхӑн ҫакӑнта вӑй хуракан Елена Германовна Ильина библиотекарь (сӑн ӳкерчӗкре). Библиотека пурнӑҫа кӗртсе пыракан ҫӗнӗлӗхсем – юнашар ялсенче библиотека пункчӗсем уҫни. Паян вӗсем Опрыскъялӗнчи тата Автанкассинчи ял магазинӗсенче ӗҫлеҫҫӗ. Библиотекарь тӑрӑшнипе унти кӗнекесене улӑштарсах тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та библиотека пункчӗсенчен халӑх титӑлмасть.***

***Килтен тухайман ватӑ ҫынсем библиотека пулӑшӑвӗпе килтех усӑ курма пултарни те ял культурине ҫӗнӗ шая куҫарние систерет.***

А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.



Ыйхрав

## Район бюджечӗ: 9 уйӑх итогӗсем

Депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗн 2012 ҫулхи октябрӗн 19-мӗшӗнчи 23 № хушӑвӗпе депутатсен районти Пухӑвӗн черетсӗр 22-мӗш ларӑвне октябрӗн 25-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче пухаҫҫӗ. Лару 10 сехетре пуҫланать.

Ларура пӑхса тухма кун йӗркине ҫак ыйтусене кӗртме сӗннӗ:

1. Депутатсен районти Пухӑвӗн 2011 ҫулхи ноябрӗн 30-мӗшӗнчи С-12/3 № «Чӑваш Республикинчи Муркаш районӗн 2012 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.

2. Муркаш районӗн бюджетне 2012 ҫулхи 9 уйӑх итогӗсемпе мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен.

3. Муниципаллӑ служба должноҫӗсене ылмаштаракансен должноҫри оклачӗсен виҫисем, уйӑхсерен тата ытти йышши хушса тӳлемелли виҫесем пирки калакан положение улшӑнусем кӗртесси, ҫакна туса ирттерессин йӗрки ҫинчен.

4. Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхӗнчи пурлӑха Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗн харпӑрлӑхне парасси ҫинчен.

Ларӑва район администрацийӗн структура подразделенийӗсен ертӳҫисене, ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене, районти предприятисен, организацисен тата учрежденисен ертӳҫисене йыхравлаҫҫӗ.

## Социаллӑ программӑсене хутшӑнса

***Пенси фончӗн республикӑри уйрӑмӗ Чӑваш Енри социаллӑ программӑсене пурнӑҫа кӗртнӗ ҫӗре активлӑ хутшӑнать.***

Вӗсен тӗллевӗ – социаллӑ хӳтлӗхе тата пулӑшӑва тивӗҫлӗ граждансене социаллӑ гарантисем туса пама меллӗ условисем йӗркелесси. 11 ҫул хушшинче ӗҫлемен пенсионерсене адреслӑ социаллӑ пулӑшупа тивӗҫтерме тата ҫынсене социаллӑ хӳтлӗх паракан учрежденисен пурлӑхпа техника базине ҫирӗплетме 228 миллион тенкӗ уйӑрнӑ. РФ Пенси фончӗн укҫи-тенки шучӗпе ҫуртсене тӗпрен юсанӑ тата куллене юсав ӗҫӗсене туса ирттернӗ, автотранспорт, сӗтел-пукан тата оборудовани туяннӑ. Вӑл шутра – реабилитаци оборудованийӗ те. Ҫав тапхӑрта, тӗпрен илсен, республикӑри кашни социаллӑ учреждени тенӗ пекех социаллӑ программӑна хутшӑннӑ.

**Программӑна 2011 ҫулта пурнӑҫа кӗртнин итогӗсем:**

– Раҫҫей Пенси фончӗ шучӗпе ватӑ ҫынсемпе инвалидсен Кӳкеҫри тата **Йӳҫкассинчи** интернат ҫуртчӗсенче, Карапай Шӑмӑршӑри, Калининти, **Шомикри** психоневрологи интерначӗсенче тата Шӗмшеш ялӗнчи вӑхӑтлӑх пурӑнмалли уйрӑмра юсав ӗҫӗсем 2755,7 пин тенкӗлӗх туса ирттернӗ;

– ҫынсене социаллӑ пулӑшу паракан центрсен мобильлӗ бригадисем валли 4680,6 пин тенкӗлӗх 19 автомашина туяннӑ;

– ӗҫлемен 307 пенсионера 589,6 пин тенкӗлӗх адреслӑ пулӑшу панӑ.

Республикӑра

## Ҫӗнӗ указ

ЧР Пуҫлӑхӗ «Чӑваш Республикин отраслӗсен хушшинчи геоинформацин комплекслӑ тытӑмне туса хумалли мерӑсем ҫинчен» 117 № Указа октябрӗн 22-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

Чӑваш Республикинчи отраслӗсен хушшинчи геоинформацин комплекслӑ тытӑмне туса хуни экономика аталанӑвне инвестицисем хывас, инноваци технологийӗсене вӑя кӗртес енӗпе пысӑк пулӑшу памалла.

## Пиллӗкмӗш ача сачӗ

Патӑрьел районӗнчи Шӑнкӑртам ялӗнче 186 вырӑнлӑх ача сачӗ уҫӑлнӑ. Республика пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев пухӑннисене саламланӑ май республикӑра ҫынсен пурнӑҫ пахалӑхне лайӑхлатмалли патшалӑх политикине тытса пынине палӑртнӑ. Ҫав шутра – ача сачӗсем ҫитменнипе ҫыхӑннӑ ҫивӗч ыйтӑва татса парасси те.

Шӑнкӑртамри ача сачӗ – кӑҫал Чӑваш Енре хута янӑ пиллӗкмӗш ача сачӗ. Ҫулталӑк вӗҫлениччен тата икӗ садик уҫӑлмалла.

## Палӑк лартаҫҫӗ

Сӗнтӗрвӑрри хулинче 2013 ҫулта Мария Александровна императрицӑна халалласа палӑк лартаҫҫӗ. Пуҫласа ҫак шухӑш 2005 ҫулта хула 150 ҫул тултарнине уявланӑ чухне ҫуралнӑ. Хулана хӑй вӑхӑтӗнче Иккӗмӗш Александр император мӑшӑрне чысласа Мариинский Посад ят панӑ.

Ҫитес ҫул Романовсен ҫурчӗ 400 ҫул тултарать. Ҫавна май Шупашкарта часавай уҫаҫҫӗ. Ӑна пӗрремӗш патшан асламӑшне Мария Шестаковӑна халаллаҫҫӗ. Тӗпчевҫӗсем палӑртнӑ тӑрӑх ӑна Шупашкар хулинче пытарнӑ.

## Врачсене – хушма ҫӑмӑллӑх

Ялта ӗҫлеме килӗшнӗ врачсем халӗ 1 миллион тенкӗ чухлӗ патшалӑх пулӑшӑвне кӑна мар, тата тепӗр ҫӑмӑллӑха та тивӗҫеҫҫӗ. Малашне врачсен ипотека кредичӗн процент тӳлевӗсен 4 процентне 10 ҫул хушши республика саплаштарать. Ку ҫӑмӑллӑха пурнӑҫа кӗртме укҫа-тенкӗне республика бюджетӗнчен уйӑрнӑ. Ҫапла майпа врачсемшӗн ипотека кредичӗн ҫулталӑкри процечӗ 11,5–12,5-пе мар, 7,5–8,5 процентпа танлашӗ.

Хамӑр инф.

Сывлӑх

## Вакцинаци пуҫланчӗ

Районти тӗп больницӑран пӗлтернӗ тӑрӑх ку эрнере ача сачӗсене ҫӳрекенсене тата шкул ачисене «Гриппол+» вакцинӑпа прививка тӑвас ӗҫ пуҫланнӑ. Района килнӗ 3200 доза вакцинӑна участоксем тӑрӑх валеҫсе панӑ. Ҫапла вара прививкӑна участокри медицина ӗҫченӗсем тӑваҫҫӗ.

Саккунпа килӗшӳллӗн 14 ҫул тултарман ачасене прививка тӑвасси пирки ашшӗ-амӑшӗнчен е вӗсен саккунлӑ представителӗсенчен килӗшӳ ыйтаҫҫӗ. Аса илтеретпӗр, паянхи куна вакцина грипп чирне асӑрхаттармалли чи вӑйлӑ мел шутланать. «Гриппол+» вакцинӑпа 3 ҫул тултарнисенчен пуҫласа прививка тӑваҫҫӗ.

Н. НИКОЛАЕВА.

Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центрта

## Вӗренекенсене – пулӑшу

Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центрпа килӗшӳ туса шкулсенче вӗренекенсем те укҫа ӗҫлесе илеҫҫӗ. 14–18 ҫулхи вӗренекенсем вӗренӳрен пушӑ вӑхӑтра тӗрлӗ ӗҫе хутшӑнаҫҫӗ.

Кӑҫал 670 вӗренекене вӑхӑтлӑх ӗҫ тупса пама 572,85 пин тенкӗ уйӑрнӑ. Ӗҫпе тивӗҫтерекен центр вӗренӳ учрежденийӗсемпе 32 килӗшӳ туса шӑпах ҫавӑн чухлӗ ҫамрӑка ӗҫпе тивӗҫтернӗ. Хальлӗхе палӑртнӑ суммӑн 481,696 пин тенкине ҫамрӑксем ӗҫлесе илнӗ. Вӗсем ял хуҫалӑхӗнчи ӗҫсенче, территорие тирпей-илем кӗртессипе ытларах тимленӗ, шкулсенчи вак-тӗвек юсав ӗҫӗсене те пурнӑҫланӑ.

Ҫапла майпа укҫа ӗҫлесе илме тата ҫав хушӑрах ӗҫе хӑнӑхма чи малтанах сахал тупӑшлӑ ҫемьесенче, нумай ачаллӑ ҫемьесенче ӳсекен ачасене явӑҫтарнӑ. Шкулсенчи тата районти ҫул ҫитменнисемпе ӗҫлекен комиссисен учечӗсенче тӑракансене те, йывӑр лару-тӑрулла ҫемьесенчи тата опекӑна илнӗ ачасене те айкинче хӑварман.

Хамӑр инф.

Сывӑ пурнӑҫ йӗркишӗн

## Конкурса хутшӑнӑр

Районта «Ҫамрӑксем сывӑ пурнӑҫ йӗркишӗн» акци пырать. Ҫавна май районти администрацийӗн вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин пайӗн специалисчӗсем маларах палӑртса хунӑ мероприятисене пурнӑҫласси пирки тӑрӑшаҫҫӗ.

Акци вӑхӑтӗнче кашни шкултах «Вӗренӳ тата сывлӑх» шкул программине хатӗрлекен тата малашне пурнӑҫа кӗртекен ятарлӑ канашсем тума палӑртнӑ. Кунсӑр пуҫне октябрь–ноябрь уйӑхӗсенче район шайӗнче кӑна мар, пур вӗренӳ учрежденийӗнче те тӗрлӗ спорт ӑмӑртӑвӗсем, ятарлӑ тренингсем, сывӑ пурнӑҫ йӗркине халалланӑ калаҫусем чылай иртӗҫ. Ачасемпе ҫамрӑксем тематика буклечӗсем кӑларса районти конкурса та хутшӑнӗҫ.

Октябрӗн 22-мӗшӗнче акӑ «Ҫамрӑксене преступлени тӑвассинчен асӑрхаттарасси» ятпа районти ҫамрӑксен пӗрлехи информаци кунӗ иртрӗ. Вырӑнсенчи ҫамрӑксен канашӗсем, шкулсенчи общественӑлла организацисен ертӳҫисемпе пӗрлех унта Шалти ӗҫсен министерствин районти пайӗн сотрудникӗсем те, психологсемпе врачсем те хутшӑнчӗҫ. Информаци кунне хутшӑннисем пӗр-пӗрнипе тачӑ ҫыхӑнура ӗҫлеме тата ҫак ӗҫпе вырӑнсенче кая юлмасӑр паллаштарма килӗшсе татӑлчӗҫ.

**Район хаҫачӗ те «Ҫамрӑксем сывӑ пурнӑҫ йӗркишӗн» акцие хутшӑнмасӑр юлмасть. Ноябрӗн 10-мӗшӗччен ачасемпе ҫамрӑксем те, аслӑ ӑрурисем те редакцие «Эпӗ сиенлӗ йӑласене хирӗҫ» ятпа ҫырнӑ материалсем ҫырса конкурса хутшӑнма пултараҫҫӗ. Материалсене тӗрлӗ жанрта ҫырма юрать: заметка, интервью (тен пирус туртма е эрех ӗҫме пӑрахнӑ ҫынсемпе калаҫма май пур), репортаж тата ытти те. Чи интереслисене ноябрӗн 15-мӗшӗнче паллӑ тӑвакан Пируссӑр пӗтӗм тӗнчери куна халалланӑ «Сывлӑхлӑ пулар» кӑларӑмра пичетлетпӗр. Конкурс ҫӗнтерӳҫисене дипломсем те кӗтеҫҫӗ.**

**Материалсене ҫырупа Муркаш сали, Мир урамӗ, 9А ҫурт адреспа е morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru электронлӑ адрессемпе конкурса тесе палӑртса ярса пама пултаратӑр.**

Н. НИКОЛАЕВА.

Кӗскен

## Грант ҫӗнсе илнӗ

Республикӑри Вӗренӳ тата ҫамрӑксен политикин министерстви грантсен конкурсне пӗтӗмлетнӗ. Конкурса кӑҫал 60 ӗҫ тӑратнӑ пулнӑ, республикӑри 16 ача сачӗ валли пурӗ 700 пин тенкӗ ытла укҫа-тенкӗ уйӑрнӑ.

Муркашри «Путене» ача сачӗ ҫӗнтерӳҫӗсен йышне кӗме пултарнӑ. Ача сачӗн ӗҫӗ хевтесӗр ачасен шкулччченхи вӗрентӗвне вариативлӑ формӑсемпе йӗркелесси енӗпе палӑрнӑ. «Путене» 100 пин тенкӗлӗх грант ҫӗнсе илнӗ.

Хамӑр инф.

Ҫырӑнтару – 2013

## Хаклӑ вулаканӑм!

**Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2013 ҫулхи январьтен илсе тӑма малалла ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Эпир вулакансене пӗлтерӗччӗ, июль уйӑхӗнчен шӑмат кунсенчи кӑларӑм 8 страницӑпа тухма пуҫларӗ.**

**Райхаҫат редакцийӗ.**

# Тĕп вырăнта – строительство ыйтăвĕсем

Канашлуран

***Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев октябрĕн 22-мĕшĕнче ял тăрăхĕсен хăшпĕр пуçлăхĕсемпе тата вырăнсенчи ял хуçалăх предприятийĕсен ертÿçисемпе канашлу ирттерчĕ. Канашлу ĕçне унăн çумĕсем Владислав Ананьев, Владимир Никитин, Лилия Тарасова тата ыттисем те хутшăнчĕç. Пĕтĕмĕшле илсен сăмах вырăнсенчи пурăнмалли çурт-йĕр строительстви пирки пычĕ. Çавна май канашлăва çурт-йĕр строительстви енĕпе ĕçсем туса ирттерме палăртакан ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе территорисенчи ял хуçалăх предприятийĕсен ертÿçисене чĕннĕ те. Вĕсен шутĕнче Уйкас Янасал, Муркаш, Çатракасси, Хорнуй, Ярапайкасси, Юнкă ял тăрăхĕсем.***

РФ Правительстви 2008 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕнче пилот проекчĕсемпе килĕшÿллĕн ял тăрăхĕсенче комплекслă компактлă строительство ĕçĕсем туса ирттерме тата территорисене тирпей-илем кĕртме РФ субъекчĕсен бюджечĕсене федераллă бюджетран укçа-тенкĕ уйăрса парасси пирки йышăну тунă. Ăна тĕпе хурса ЧР Президенчĕ 2009 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче республикăра ял тăрăхĕсенче комплекслă компактлă строительство ĕçĕсем туса ирттерес тата территорисене тирпей-илем кĕртес енĕпе пилот проекчĕсем пурнăçа кĕртесси пирки Указа алă пуснă.

Проектсен конкурсĕ малтан палăртнă тăрăх 2013 çулхи февраль – март уйăхĕсенче ирттермелле. Финансласси 2014 çулта тытăнать.

Пилот проекчĕсем туса хатĕрлессипе халех çине тăрса ĕçлемеллине палăртрĕ Ростислав Николаевич. Проект валли уйăракан çĕр участокĕсем ял тăрăхĕсен муниципаллă харпăрлăхĕнче пулмалла. Пилот проекчĕ шутне инженерипе социаллă инфраструктура объекĕсем тăвасси тата пуррисене юсасси, территорисене тирпей-илем кĕртесси кĕрессĕ. Апла пулсан çурт-йĕр çавăрма, хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма кăмăллисем пулсан ку микрорайон валли çул тăвасси, газ, электричество кĕртесси, шыв пăрăхĕсем хурасси, социаллă объектсем çĕклесси проблемăллă пулмалла мар.

Пилот проекчĕсене категорисем тăрăх палăртнă. Пĕрремĕш категорие тивĕçме пурăнмалли 10 çуртран кая мар кирлĕ. Кун пек проект хакĕ 76 миллион тенкĕпе танлашать. Вăл шутран 30 процентне субсидисем шучĕпе федераллă бюджетран, 50 процент республика бюджетĕнчен уйăрĕççĕ. 20 процентне комплекслă строительство проекчĕсен йĕркелÿçисем пулса тăракан ял хуçалăх предприятийĕсен тÿлеме тивет.

Кунта ыйтусем те çук мар. Тăкаксен пĕр пайне ял хуçалăх предприятийĕ тÿлет пулсан, çĕнĕ çуртсенче пурăнма пуçăнакансем ял хуçалăх производствинче вăй хуракансем пулни те пĕлтерĕшлĕ. Çĕнĕ çуртсем çĕклекенсен тĕрлĕ программăсене хутшăнса харпăр хăй валли çурт-йĕре хăйсен вăйĕпе тумалла.

Çитменнине тата вăхăт ыйтăвĕ. Сахалтан та 2 çул хушшинче пурăнмалли çуртсене туса пĕтерес пулать. Унсăрăн мĕнле пулса тухать-ха? Çĕнĕ урамра çулĕ те, газĕ те, электричестви те, шывĕ те, ытти те пур тейĕпĕр, пурăнмалли çурчĕсем вара çук.

Пилот проектне ял тăрăхĕ туса хатĕрлеме тивĕç. Харпăр хăйĕн çурт-йĕрĕн проекчĕсемпе строительство ĕçĕсене çынсем хăйсем тăваççĕ. Проектсене пурнăçа кĕртессипе ял тăрăхĕсемпе ял хуçалăх предприятийĕсем, çурт-йĕр тăвакан уйрăм çынсем пĕрле çыхăнса ĕçлени кирлĕ пулнине палăртрĕç канашлура.

Хăйсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма тивĕçлĕ нумай ачаллă çемьесене, тăлăх ачасене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси мĕнле пулса пыни пирки те сăмах пулчĕ. Кун пеккисем районта 11 çемье. Вĕсем валли эконом класлă хăтлă çурт-йĕр тăвасси, энерги ресурсĕне перекетлеме май паракан хальхи технологи мелĕсемпе усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Малтанах вара çавна валли çĕр участокĕсен резервне пăхса хурас пулать. Çак пур ĕçсем те территорисене комплекслă аталантармалли муниципаллă программăра палăрмалла.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă мăшăр, хисеплĕ атте, маçак, кукаç, шăллăм, пичче, кукка, хăта – Оринин ялĕнче пурăнакан **Николай Давыдович ИВАНОВ** октябрĕн 24-мĕшĕнче 60 çул тултарать. Эпир ăна сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе малашне те çирĕппĕн утма ырлăх-сывлăх, тулли телей, ăнăçу сунатпăр. Эс пурри – пирĕншĕн нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 2 хĕрĕ, кĕрĕвĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, пиччĕшĕсем, аппăшĕ, йăмăкĕ çемйисемпе, хăтисем, çывăх тăванĕсем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă аннене – Катăкуй ялĕнче пурăнакан **Зоя Митрофановна ВАСИЛЬЕВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăвансемпе ялапах килĕштерсе пурăнмалли пултăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр. Турри сана пире савăнтарса пурăнма тата нумай çул усратăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, икĕ кинĕ, мăнукĕсем Ромăпа Маша, Сорокинсен, Васильевсен çемйисем, тăванĕсем.**



Орининти вăтам шкулта нумай çул учительте ĕçленĕ **Николай Давыдович ИВАНОВА** 60 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсир ачасене тарăн пĕлÿ тата тĕрĕс воспитани парас ĕçре учительсен, ашшĕ-амăшĕсен, ачасен хисепне тивĕçрĕр. Эпир сире ырă сунса сирĕнпе мухтанатпăр. Сывлăхăр сирĕн пĕрре те ан хавшатăр, инкек-синкекĕ пăрăнса çÿретĕр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Салампа: Орининти вăтам шкул коллективĕ, кунтан вĕренсе тухнисемпе шкул ачисем.**

Иыхрав

# Çара – контракт мелĕпе

Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕ çар ĕçне Тĕп çар округĕнче контракт мелĕпе пурнăçлама йышăнать. Асăннă округа Йошкар-Ола, Оренбург хулисем, Самарăпа Мускав облаçĕсем, Пушкăртстан Республики кĕрет.

Çар ĕçне çак мелпе пурнăçлас текенĕн маларах салтакра пулни кирлĕ. Хальхи тапхăрта мотострелковăй, артиллери çар чаçĕсене С, Д, Е категориллĕ водительсене йышăнасси пырать. Çавăн пекех ВДВ, ВМФ, РВСН чаçĕсем те сире кĕтеççĕ.

Кандидат 30 çултан аслă мар, сывлăх тĕлĕшĕнчен çар ĕçне юрăхлă "А", "Б" категориллĕ, вĕренÿ шайĕ 11 класран пĕчĕк мар тата айăплавсăр пулмалла.

Контракт мелĕпе çар ĕçне пуçăнас текенĕн заявлени çырмалла, унпа пĕрлех ытти документсене те тăратмалла. Гражданин çар ĕçне юрăхлине йышăну пунктĕнче (Шупашкар хули, Пирогов урамĕ, 10 А çурт) пĕлтерĕççĕ.

Çар ĕçне контракт мелĕпе пурнăçлакансем тĕрлĕ çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. Вĕсене укçан хавхалантарнин вăтам калăпăшĕ 21 пинрен пуçласа 30 пин тенкĕ таран, унсăр пуçне кашни кварталта тÿлессине пăхнă. Хавхалантару шайĕ çар тивĕçĕнчен килет. Çавăн пекех вĕсене пурăнмалли вырăнпа тивĕçтерĕççĕ.

Контракт ĕçĕпе çыхăннă ыйтусемпе пирĕн пайри 12, 15, 16, 17 пÿлĕмсенче йышăнаççĕ, çавăн пекех (883541) 62-1-89, 62-7-01 номерсемпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**А. КОЧУРОВ,**
**Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн ертÿçи.**

Сывлăх

# Шурă туяллă çын тимлĕх кĕтет

Пысăк йыш хушшинче сывлăх енĕпе хăш-пĕр кăлтăклă çынна асăрхама йывăр мар. Акă, тĕслĕхрен, куç япăх куракан е пачах курман хÿтлĕх кĕтекен çынна аллине шурă туя тытнипе уйăратпăр. Ку символăн историйĕ 1921 çулта пуçланнă. Çамрăклăх çулĕсенче Джеймс Бигс суккăрланса юлнă, апла пулин те вăл хăй пурнăçне кичеммĕн ирттермен, ăна тĕрлĕ енлĕ аталантарнă. Çынсенчен уйăрмах курăнас тесе туйине шурă тĕспе сăрланă, ыттисене те çапла тума сĕннĕ. Францире ку юхăм 1930 çулта пуçланнă, ун хыççăн ыттисем те ку йăлана вăя кĕртнĕ.

Çапла вара октябрĕн 15-мĕшĕнчен шурă туя кунне халалланă тĕрлĕ мероприяти тапхăрĕ иртет, çакă пĕр кунпа кăна вĕçленмест. Куç курман çыншăн туя усă курмалли хатĕр кăна мар, çавăн пекех вăл унăн куçĕ те.

Раççейри куç курманнисен районти обществăлла организацийĕн членĕсем асăннă мероприяти тапхăрĕнче республика шайĕнче иртекен шашка, шахмат ăмăртăвĕсене хутшăнчĕç. Вунă район хушшинче Муркашсем пысăк ăсталăх кăтартрĕç. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх А. Николаев, И. Васильева, К. Павлова иккĕмĕш вырăнсене тивĕçрĕç.

Çавăн пекех «Пÿрт-çурт хăтлăхĕ кĕтесре мар, техĕмлĕ кукăль-çăмахра» конкурс иртрĕ. Ăстаçăсем хăйсен ĕçĕсемпе район шайĕнче паллаштарнă хыççăн республика кайрĕç. Жюри членĕсем кунта тутлă çимĕç кăна мар, ăс-тăн çивĕчлĕхне те тĕрĕслерĕç. Çапла вара Е. Пушкина республикăра иртнĕ конкурсра виççĕмĕш вырăна тивĕçрĕ. Районти организаци вара асăннă ĕç-хĕле йĕркелеме ирттерессипе чи маттурри пулчĕ. Çакă тата ытти мероприятисем йĕркелеме, республика шайне хутшăнма асăннă организацие район администрацийĕ, «Никита» автостанци, Муркаш пасарĕ, перекет банкĕн хушма офисĕ пулăшать.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Налуксем

# Çăмăллăхсем: камсем тивĕçеççĕ вĕсене?

***Саккунсемпе килĕшÿллĕн пурлăх, çĕр, транспорт налукĕсем тÿлессипе граждансен уйрăм категорийĕсем валли çăмăллăхсем пăхса хунă. Вĕсем пирки налук инспекцийĕн камераллă тĕрĕслевсен пайĕн тĕп патшалăх налук инспекторĕ Р.В. ИЛЬИН каласа парать.***

**– Камсене хăтараççĕ-ха уйрăм çынсен пурлăхĕшĕн налук тÿлессинчен?**

– РФ 1991 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче йышăннă «О налогах на имущество физических лиц» Саккунĕпе килĕшÿллĕн çаксене пурлăхшăн налук тÿлессинчен хăтарнă:

– Совет Союзĕн Геройĕсемпе РФ Геройĕсене, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕсене;

– 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăн инвалидĕсене, ачаран инвалидсене;

– граждан вăрçин тата Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене, ытти çар операцийĕсене хутшăннисене, партизан пулнисене;

– Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула шар курнисене;

– çар службинче 20 çул ытла пулнисене;

– ядерлă тата термоядерлă хĕç-пăшала тĕрĕслеме хутшăннă подразделенисенче пулнисене;

– çемьере тăрантаракана çухатнă çар çыннисен çемье членĕсене.

**– Çурт-йĕршĕн, пурăнмалли пÿлĕмшĕн тата ытти сооруженисемшĕн камсем налук тÿлемеççĕ?**

– РФ пенси законодательствипе килĕшÿллĕн пенси илсе тăракан çынсем;

– çар службинчен тата çар сборĕсенчен таврăннă граждансен, енчен те вĕсем интернационалла тивĕçе Афганистанра, çапăçусем пынă ытти çĕр-шывсенче пурнăçланă пулсан;

– хăйсен служба тивĕçне пурнăçланă чухне вилнĕ çар çыннисемпе патшалăх служащийĕсен ашшĕ-амăшĕсем, мăшăрĕсем;

– культура, искусство ĕçченĕсем, халăх маçтăрĕсем тата культура организацийĕсем хăйсен ятарласа хатĕрленĕ сооруженийĕсемшĕн, строенийĕсемшĕн, пÿлĕмĕсемшĕн (пурăнмалли çурт-йĕр те кĕрет), енчен те вĕсемпе пултарулăх мастерскойĕ, ателье, студи, музей, галерея, библиотека валли усă кураççĕ пулсан тата усă курнă çав тапхăршăн;

– граждансен коммерциллĕ мар дача тата сад пĕрлешĕвĕсен участокĕсенче вырнаçнă 50 тăваткал метртан ытла мар лаптăк йышăнакан пурăнмалли çурт-йĕрпе хуçалăхри сооруженисемшĕн.

Чечен Республикинче тата Çурçĕр Кавказри ытти территорисенче çар конфликчĕсене хутшăнса «Ветеран боевых действий» удостоверенисене тивĕçнисем валли пурлăхшăн налук тÿлессипе çăмăллăхсем пăхса хуман.

**– Чăваш Республикин 2001 çулхи июлĕн 23-мĕшĕнче йышăннă «О вопросах налогового регулирования в Чувашской Республике, отнесенных законодательством Российской Федерации о налогах и сборах к ведению субъектов Российской Федерации» Саккунĕпе транспорт налукĕ тÿлесси камсене пырса тивмест?**

– Совет Союзĕн тата Раççей Федерацийĕн Геройĕсене, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕсене;

– инвалидсене, инвалид ачасене, Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула шар курнисене тата вĕсен обществăлла пĕрлешĕвĕсене, хуçалăх юлташлăхĕсемпе обществисене, вĕсен устав капиталĕ инвалидсем хывнă укçа-тенкĕрен пухăнать пулсан тата транспорт хатĕрĕпе уставра пăхнă ĕç-хĕле пурнăçлама усă кураççĕ пулсан.

**– Çĕр налукне камсен тÿлемелле мар?**

– РФ Налук кодексĕпе килĕшÿллĕн муниципаллă йĕркелÿсен халăх суйлакан органĕсем граждансен уйрăм категорийĕсем валли çĕр налукĕ тÿлессипе çăмăллăхсем хăйсем палăртаççĕ.

Хĕрлĕ Чутай, Муркаш, Етĕрне районĕсенчи депутатсен ял тăрăхĕсенчи Пухăвĕсен йышăнăвĕсемпе çĕр налукĕ тÿлессинчен Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инвалидĕсене хăтарнă. Налук тÿлекенсен ытти категорийĕсемшĕн Кодексăн 391-мĕш статйи вăйра. Кунпа пĕрлех 2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Етĕрне районĕнче 1-мĕш ушкăн инвалидĕсем çĕр налукĕ тÿлемеççĕ.

Налук кодексĕпе килĕшÿллĕн налук тÿлекен кашни çын пуçне налук хумалли база виçине 10000 тенкĕ чухлĕ чакарма çĕр хуçисен çак категорийĕсем валли пăхса хăнă:

– Совет Союзĕн тата РФ Геройĕсем, Мухтав орденĕн тулли кавалерĕсем;

– 1-мĕш ушкăн инвалидĕсем, 2004 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен панă 2-мĕш ушкăн инвалидĕсем;

– ачаран инвалидсем;

– Аслă Отечественнăй вăрçă, ытти çапăçусен ветеранĕсемпе инвалидĕсем;

– Чернобыльти атом электростанцийĕнчи катастрофăна пула шар курнисем;

– ядерлă установкăсене, вăл шутра ядерлă хĕç-пăшала тĕрĕслесе пăхнă, ученисем ирттернĕ чухне тата çар объекчĕсенче радиаци чирĕпе чирленисем.

Налук кодексĕпе килĕшÿллĕн налук хумалли база виçине чакарма тивĕçлĕ çĕр хуçин çавна валли документсене çĕр участокĕ вырнаçнă çĕрти налук органне тăратмалла.

Енчен те куçман пурлăх е транспорт хатĕр тытакан гражданинăн налук тÿлессипе çăмăллăхсемпе усă курма право пур пулсан, унăн çавна çирĕплетекен документсене çак адресла илсе пымалла:

– Етĕрне хули, Çĕнтерĕве 30 çул урам, 2 «А» çурт;

– Муркаш ялĕ, Гагарин урамĕ, 4-мĕш çурт.

# Пĕлтерӳсем. Объявления



ИМИДЖ ОПТИКА
СЕТЬ ОПТИЧЕСКИХ САЛОНОВ

Уважаемые жители с. Моргауши и Моргаушского района

**ПРИГЛАШАЕМ БЕСПЛАТНО ПРОВЕРИТЬ ЗРЕНИЕ И ЗАКАЗАТЬ ОЧКИ**

**30 и 31 октября** с 9.00 до 17.00 в **ФСК "Сывлăх"** по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 8

**Телефон для справок: 8 919 671 11 22**

Предъявителю объявления **скидка 10%** на любые очки

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:281001:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Тимофеева Елизавета Александровна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Торханы, ул. Садовая, д. 4. Тимофеев Вячеслав Фанефедиевич, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Торханы, ул. Садовая, д. 4.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:281001:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.



**26 октября в РДК с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий.**

**Ноябрь вĕçĕнче иккĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-384-45-23.**

**Ремонт стиральных машин-автоматов с выездом на дом. Раскадка стальных и кованых дисков. Тел.: 8-953-010-21-34.**

Итоги проведения публичного слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Москакасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики.

17 октября 2012 года прошли публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

На указанном выше публичном слушании было принято следующее решение: одобрить проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».

**Решение публичного слушания**
**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:09 10 01:0076, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д.Сидуккасы, ул.Сидуковская, д.№38 б общей площадью 600 кв.м., с «для ведения личного подсобного хозяйства» на «для строительства и эксплуатации магазина».

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 7-10.**

**Чувашская Республика**
**Администрация Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**16.10.2012 г. № 904**
**с. Моргауши**

**Об утверждении перечня земельных участков, подлежащих предоставлению многодетным семьям на территории Моргаушского района**

В соответствии с законом Чувашской Республики №10 от 01.04.2011г. «О предоставлении земельных участков многодетным семьям в Чувашской Республике», постановлением администрации Моргаушского района №353 от 18.04.2011г. «О порядке предоставления многодетным семьям в собственность бесплатно земельных участков, находящихся в муниципальной собственности» администрация района ПОСТАНОВЛЯЕТ:

Утвердить перечень земельных участков, находящихся в собственности Моргаушского района, предназначенных для предоставления многодетным семьям в собственность бесплатно (прилагается).

**Глава администрации района Р.Н. ТИМОФЕЕВ.**

**Приложение к постановлению администрации Моргаушского района от 16.10.2012г. N904**

**ПЕРЕЧЕНЬ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ, ПОДЛЕЖАЩИХ ПРЕДОСТАВЛЕНИЮ МНОГОДЕТНЫМ СЕМЬЯМ НА ТЕРРИТОРИИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**

| N п/п | Местоположение, адрес | Кадастровый N земельного участка | Площадь земельного участка, га | Вид разрешенного использования земельного участка |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:79 | 0,0767 | для индивидуального жилищного строительства |
| 2. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:80 | 0,0767 | для индивидуального жилищного строительства |
| 3. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:81 | 0,0767 | для индивидуального жилищного строительства |
| 4. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:82 | 0,0651 | для индивидуального жилищного строительства |
| 5. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:83 | 0,0651 | для индивидуального жилищного строительства |
| 6. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:84 | 0,0651 | для индивидуального жилищного строительства |
| 7. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Кумыркасы, ул.Центральная | 21:17:060901:85 | 0,0651 | для индивидуального жилищного строительства |
| 8. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Турикасы, ул.Молодежная | 21:17:050401:197 | 0,0750 | для индивидуального жилищного строительства |
| 9. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д.Турикасы, ул.Молодежная | 21:17:050401:198 | 0,0750 | для индивидуального жилищного строительства |
| 10. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д.Полевые Хачики | 21:17:090602:157 | 0,0572 | для индивидуального жилищного строительства |
| 11. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д.Полевые Хачики | 21:17:090602:158 | 0,0572 | для индивидуального жилищного строительства |
| 12. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д.Полевые Хачики | 21:17:090602:159 | 0,0572 | для индивидуального жилищного строительства |
| 13. | Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д.Тойгильдино, ул.Западная | 21:17:140401:176 | 0,0967 | для индивидуального жилищного строительства |

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Замкова Елена Анатольевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чураккасы, ул. Базарная, д. 128.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Волга», земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:031001, площадью 1,56 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим, кадастровый инженер Токмолаева Л.И., номер квалификационного аттестата 21-10-34, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, e-mail:ingenercheb@ya.ru, тел.: 28-06-06 извещает участников долевой собственности СХПК «Оринино» о подготовке проекта межевания земельного участка, выделяемого в счет земельной доли в пятом поле.

Заказчиком работ по подготовке проекта межевания земельного участка является: Николаева А.В., адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Басурманы, ул. Главная, д. 35.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомится по адресу: г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 304, с 9 часов 00 мин. по 16 часов 30 мин. в течении 30 дней со дня опубликования настоящего извешения. Для ознакомления с материалами проекта межевания заинтересованным лицам необходимо при себе иметь: - документ, удостоверяющий личность; - свидетельство о праве собственности на земельную долю или иной документ в соответствии со ст. 18 Федерального Закона № 101-ФЗ «Об обороте земель сельскохозяйственного назначения».

Обоснованные возражения* относительно размера и местоположения границ выделяемого в счет земельной доли земельного участка, после ознакомления с проектом межевания, направляются или вручаются в письменной форме в течение 30 дней со дня опубликования настоящего извещения по двум адресам: 1) 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 304. 2) 428017, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр-кт Московский, д. 37, филиал ФГБУ «Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии» по Чувашской Республике-Чувашии.

(*В соответствии со ст. 13 Федерального закона № 101-ФЗ «Об обороте земель сельскохозяйственного назначения» возражения должны содержать фамилию, имя и отчество лица, выдвинувшего эти возражения, реквизиты документа, удостоверяющего его личность, обоснование причин его несогласия с предложенными размером и местоположением границ выделяемого в счет земельной доли (долей) земельного участка, кадастровый номер исходного земельного участка. Должны быть приложены копии документов, подтверждающих право лица на земельную долю в исходном земельном участке).

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

## Тав тăватпăр

Эпир Турай ял тăрăхĕнчи Кĕçĕн Чурашра пурăнатпăр. Килти хушма хуçалăх тытса пушă вăхăтра хамăра хушма ĕçпе тивĕçтеретпĕр. Ялта пурăнаканшăн ĕне-выльăх çур пурнăç пулни – ĕмĕртен пыракан тĕрĕслĕх. Çавна май ĕне пăрулаттарасси – килти хушма хуçалăх хуçишĕн çулленех йывăр экзамен. Çак вăхăтра кӳнĕ пулăшу ял çыннишĕн темĕнтен те паха. Нумаях пулмасть пирĕнпе те çапла пулса тухрĕ. Çавăнпа та ĕне пăрулаттарма пулăшнăшăн Турайри ветлечебницăра ĕçлекен Светлана Кузеева ветфельдшера паян чĕререн тав тăватпăр.

**Петровсен çемйи.**

* * *

**Январь уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Янăм ялĕ, Етĕрне районĕ.**
**Тел.: 8-927-993-36-72. 1-2.**

* * *

**Продам: кровати армейского образца – 1000 руб.; матрац, подушка, одеяло – 700 руб.; дверь металлическая производство Китай – 3000 руб. Доставка бесплатная. Тел.: 8-915-051-94-23, 8-916-417-06-84. 7-12.**

* * *

**Просим откликнуться очевидцев ДТП, происшедшего на 487 км трассы Москва – Уфа, в 10 км от Лысково в 11 ч. 15 мин. 1 октября 2012 г., столкновение ВАЗ-2112 и Джип Landcruser Prado. Позвоните, пожалуйста, по телефонам: 8-937-955-61-33 или 8-927-862-93-23.**

* * *

**Икĕ уйăхри вăкăр тата кроликсем сутатăп.**
**Тел.: 8-937-370-69-57.**

* * *

**Вунă уйăхри хура-шурă, сакăр уйăхри шурă-хĕрлĕ тынашкисем сутатпăр. Тел.: 8-927-666-86-57.**

* * *

**Май уйăхĕнче иккĕмĕш пăруламалли хура-шурă (шурри сахал) ĕне сутатпăр. Тел.: 8-905-028-47-00.**

* * *

**Йăмра вутти сутатăп, метр тăршшĕ татса ваклană. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-937-371-76-92.**

* * *

**Продаю березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 2-2.**

* * *

**Март пуçламăшĕнче çиччĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне 35 пин тенкĕпе сутатăп. Тел.: 8-917-677-61-18.**

* * *

**Май уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-908-306-81-46.**

* * *

**Автосервис «Мой мастер» с. Моргауши оказывает услуги по ремонту, мойке автомобилей. Открылся шиномонтаж. Требуются с опытом работы: автослесарь и слесарь по шиномонтажу. Тел.: 8-927-84-74-508.**

* * *

**Апрель уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-844-84-18.**

* * *

**Продаем чистокровных зааненских козочек (3 месяца) и козла производителя. Есть родословная на родителей. По всем вопросам обращаться по тел.: 8(8352)36-10-21.**

* * *

**Дорожному предприятию требуются дорожные рабочие, водители на самосвал КамАЗ, водитель на автобус Газель, машинисты на бульдозер ДТ-75, на экскаватор ЕК-18, ЮМЗ. База находится в д. Москакасы–АБЗ. Тел.: 8-917-658-84-05.**

* * *

**В строительную фирму требуются монолитчики. Есть возможность официально трудоустроиться. Вахта 20 дней, з/п по окончанию вахты. Тел.: 8-964-531-05-38, 8-917-066-58-58. Владимир. 1-4.**

* * *

**Апрелĕн 3-мĕшĕнче пăруламалли хĕрлĕ тĕслĕ тынашки сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.**
**Тел.: 8-919-651-79-68.**

* * *

**Март уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-853-29-55.**

* * *

**Продается красная корова, третий отел в апреле.**
**Тел.: 8-903-066-79-16.**

* * *

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.**

Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта 7-мĕш тата 8-мĕш классенче вĕренекенсем хăйсен тантăшĕсен Аленăпа Андрей Ильинсен амăшĕ

**Татьяна Анатольевна ИЛЬИНА**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки чĕререн хурланни çинчен пĕлтерессĕ.

## Прогноз погоды

| | среда 24 октября | | | | четверг 25 октября | | | | пятница 26 октября | | | | суббота 27 октября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +1 | 0 | +2 | 0 | 0 | 0 | +3 | +1 | +1 | +3 | +5 | +6 | +3 | +2 | +4 | 0 |
| Давление мм | 751 | 750 | 748 | 746 | 743 | 741 | 739 | 738 | 736 | 733 | 729 | 726 | 731 | 734 | 739 | 744 |
| Влажность % | 83 | 76 | 62 | 85 | 88 | 80 | 69 | 77 | 87 | 86 | 82 | 85 | 67 | 81 | 61 | 72 |
| Ветер м/сек | 2 | 4 | 3 | 2 | 4 | 6 | 5 | 4 | 6 | 7 | 8 | 8 | 9 | 5 | 6 | 5 |
| | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 07:44 | 17:29 | | | 07:46 | 17:27 | | | 07:48 | 17:24 | | | 07:50 | 17:22 | |
| Луна восход / заход | | 15:25 | 02:37 | | | 15:41 | 02:35 | | | 15:56 | 03:49 | | | 16:12 | 05:03 | |

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 6-10.**

**Заводские пластиковые окна в 2 раза дешевле! Замер, доставка бесплатно!**
**Тел.: 8-906-385-29-30. 6-10.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин "Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ" Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 23.10.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4683.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.